Оля АНДРЕЕВА.
авăшкасси шкулĕ.

Маша ФЕДОРОВА.
ЧР, Канаш районĕ, Шăхасанти искусствăсен шкулĕ.

Анатолий ЮМАН

Космонавт автографĕ

(Аса илӳ)

1951 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче вăрах вăхăт чирлесе выртнă хыççăн анне вилсе кайрĕ. Çапла вара эпир Геннадий шăллăмпа хăр тăлăха юлтăмăр. Ун чухне иксĕмĕр те таван ялтан, Чăвашкассинчен, çирĕм çухрăмра вырнаçнă Вăта Тимĕрçенти вăтам шкулта вĕренеттĕмĕр: шăллăм 8-мĕш класра, эпĕ 10-мĕшĕнче.

Анне вилнĕ хыççăн кил хӳтлĕхĕсĕр юлсан ялти пуçламăш шкул пуçлăхĕ пире хваттертен кăларса янăччĕ. Пирĕн пӳлĕм И.Я.Яковлев лартнă шкул çуртĕнчех вырнаçнăччĕ. Кун хыççăн эпир Вăта Тимĕрçенти интернат шкулта пурăнтăмăр. Канмалли кунсенче анне тусĕ патне, кӳршĕри пысăк çемьеллĕ аппа патне, пырса çӳреттĕмĕр. Çак хушăра пире уйрăмах йывăр килчĕ: манăн урара – çĕтĕк çăм атă, çире – кивĕ фуфайка. Юрать-ха учительсем укçа пухса çĕнĕ пушмак туянса пачĕç. Телее, аннерен колнă икĕ процентлă патшалăх заемĕн облигацийĕне 1000 тенкĕ выляса илттĕмĕр. Ку та пире сывлăш çавăрма пулăшрĕ. Çапла вара эпĕ хĕл каçсан вăтам шкул пĕтеркелерĕм. Малалла вĕренесси пирки ĕмĕтленме те май çукчĕ. Алла аттестат илсе районта чăвашла тухакан "Пĕрлешӳллĕ ĕç" хаçат редакцине вырнаçма тӳр килчĕ. Каярах куншăн ырă çынсем, вăрçă ветеранĕсем Чĕмпĕр тăрăхне Чăваш Енри Вăрнар районĕнчи Маньял Хапăсран килсе тĕпленнĕ шкул директорĕ Василий Васильевич Романов тата Каша чăвашĕ çут ĕçлайĕн пуçлăхĕ Владимир Матвеевич Репин тăрăшни паллă пулчĕ. Халĕ иккĕшĕ те пирĕн хушăмăрта çук ĕнтĕ, эпĕ вара вĕсене яланах асра тытатăп.

Хаçат ĕçĕ манăн чун туртăмĕччĕ. 1947 çултах унăн страницисенче пĕрремĕш сăвă пичетлесе кăларнăскер, 1949 çулта уйăха яхăн редакцире тăрăшнăччĕ. Ун чухне эпĕ çичĕ класс пĕтернĕ вун тăваттăри ача пулнă. 1949-1951 çулсенче хаçатра чăвашсен паллă писателĕ Владимир Садай ĕçленĕ чух хастар ялкор шутланаттăм. Манăн сăвăсемпе тĕрленчĕксем, очерксемпе калавсем кашни номерте тенĕ пек кун çути куратчĕç.

Тепĕр хут хаçата вырнаçнă çулсенче ăна Шупашкартан килнĕ Зинаида Митрофановна Митрофанова поэт тата журналист алă пусатчĕ. Яваплă секретарĕ Хусанти "Хĕрлĕ ялавра" вăй хунă Владимир Ильин журналистчĕ. Мана вĕсем техника секретарьне илчĕç. Ĕç укçи – 330 тенкĕччĕ. 300 тенки алат çисе тата хваттершĕн тӳпесе пĕтет. Юлни – шăллăма пулăшма. Çапла çулталăк пурăнтăм.

Хутран-ситрен литература страницисем кăларкаласа тăраттăмăр. Зинаида Митрофанова вĕсене Шупашкара Писательсен союзне Уйăп Мишши поэт патне ярса паратчĕ. Леонид Агаков мăшăрне Александра Лазаревăна час-часах асăнатчĕ, ăна манăн тус тетчĕ. Пĕррехинче вăл Уйăп Мишшинчен çыру илчĕ. Ятлă-сумлă поэт хаçатри манăн сăвăсене асăрханă, Шупашкара çĕннисене илсе пыма хушнă. Отпуск вăхăтĕнче эпĕ ун патне пырса çитрĕм. Пуçласа чăваш писателĕсемпе тата поэчĕсемпе паллашрăм. Часах Шупашкарта "Ĭăмра" тата "Ильич сăнарĕ" сăвăсем çапăнса тухрĕç.

1960 çулхи сентябрь вĕçĕнче мана, яваплă секретаре, Хусана журналистсен ултă уйăхлă курсне вĕренме ячĕç. Палăртнă вăхăта çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен çирĕм журналист пухăнтăмăр. Эпĕ Тюмень облаçĕнчен килнĕ А.П.Пантюшинпа пĕр пӳлĕме лекрĕм. Занятисем юнашарах, Ершов урамĕнче вырнаçнă ВПШ керменĕнче, иртрĕç. Аудиторисем пысăк, çутă.

Канмалли кунсенче культура мероприятийĕсене çӳретпĕр, оперăпа балет театрĕн спектаклĕсене кайса куратпăр. Юнашарах стадион пур.

1961 çулхи март уйăхĕ. Ĕнтĕ пирĕн вĕренӳ программи вĕçленсе килет. Лекцисем практика занятийĕсемпе ылмашăнаççĕ. Пĕрне "Советский Татарстан" хаçат редакторĕ Михаил Колодин ирттерчĕ. Практика занятийĕнче пире тĕлĕнмелле задани пачĕç. "Совет çынни космоса вĕçнĕ тейĕнпĕр. Çав тĕнче пĕлтерĕшлĕ событие халлланă хаçат номерĕн макетне мĕнле тунă пулăттăр эсир?" – терĕç. Ăмăртса ĕçе пуçăнтăмăр. Паллах, унта ТАСС пĕлтерни тĕп вырăн йышăнмалла, хитре плакат кирлĕ, май пулсан космонавт сăнĕ те. Тен, сăвă та?..

Çав тапхăрта тĕнче уçлăхĕ пурсăмăра та кăсăклантарса каласа тăратчĕ. Хаçатсенче ку енĕпе совет ученăйĕсемпе инженерĕсем тунă малтанхи çитĕнӳсем çинчен хыпаросем те пичетленме пуçланăччĕ. Çапла 1957 çултах çĕр-шывра космос ракети Çĕрĕн пĕрремĕш искусствăлла спутникне вĕçтерсе яни çинчен пĕлтернĕччĕ. Анчах çакăн хыççăнах, тепĕр виçĕ çул çурăран, "Восток" карапа ларса совет çынни çар летчикĕ Юрий Алексеевич Гагарин хăйĕн çăлтăр çулне уçасси çинчен эпир шутлама та пултарайман. Чăннипе вара 1959 çул пуçламăшĕнчех М.В.Келдыш академик ертсе пынипе тĕнче уçлăхне вĕçес ыйтупа пĕрремĕш канашлу пулса иртнĕ-мĕн. С.П.Королев конструктор сĕннипе пуласкосмонавтсене те суйласа илме пуçланă. Çакнашкал вĕçев валли 30 çулалла çитнĕ, 170 сантиметртан çӳллĕ мар, 70 килограмран кая мар таякан вăй питти çын кирлĕ тесе пĕлтернĕ канашлура. 1960 çулхи январĕн 11-мĕшĕнче вара партипе правительство космонавтсем хатĕрлекен центр туса хурасси çинчен калакан директива йышăннă. Каярах çар летчикĕсенчен суйласа илнĕ ултă çын вĕçев экзаменне тытнă пулнă. Кун çинчен эпир ун чухне нимĕн те пĕлмен.

(Малалли çитес номерте).

Анатолий ЮМАН

Космонавт автографĕ

(Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте).

1961 çулхи март вĕçĕнче эпĕ журналистсен курсне пĕтерсе Аслă Нагаткинăна таврăнтăм. Апрелĕн 12-мĕшĕнче вара пурне те тĕлĕнтерекен тата савăнтаракан хыпар çитрĕ: "Этемлĕх историйĕнчи аслă событи! Тĕнчере пĕрремĕш хут "Восток" космос карапĕпе совет çынни Çĕр чăмăрĕ тавра вĕçсе çаврăнчĕ. Каялла ăнăçлăн анса ларчĕ. Космоса тухнă пĕрремĕш çын – СССР гражданинĕ Юрий Алексеевич ГАГАРИН. Пĕрремĕш космонавта чыс та мухтав!"

Пирĕн район центрĕ çеç мар, çĕр-шыв, пĕтĕм тĕнче кĕрлет, шавлать! Ку вăл тĕлĕнмелле чаплă вĕçеве хатĕрленĕ хăюллă та мал ĕмĕтлĕ çынсен: рабочисемпе академиксен, инженерсемпе конструкторсен, космонавтсен, пĕтĕм совет халăхĕн Çĕнтерĕвĕ.

***

...Репродукторпа çĕнĕ хыпарсем итлетĕп, пач кĕтмен çĕртен: "1962 çулхи августăн 11-мĕшĕнче Совет Союзĕнче орбитăна "Восток-3" космос карапĕ вĕçтерсе янă. Ăна Андриян Григорьевич Николаев космонавт летчик майор тытса пырать", – тени янăраса кайрĕ. Виççĕмĕш космонавт летчик чăваш иккен. Çакна илтсен хам та çунат хушрăм пулĕ. Çĕкленӳллĕ туйăма "Тăван ялта" ятлă лирикăлла поэмăра çырса кăтартрăм. Поэми, тĕпрен илсен, ялти тунсăх çинченччĕ, пурнăçри тӳнтер енсене курса питленисем те пурччĕ унта. Юлашкинчен вара патриотла пафоспа сыхăннă космос теми хушăнчĕ. Ăна "Ялав" журнала ярса патăм. Мана çамрăк писательсен черетлĕ канашлăвне пыма чĕнчĕç. Пухура çав поэмăна Петĕр Хусанкай тишкерчĕ. Ал çырăвĕ çине чăваш халăх поэчĕ çапла çырса хунăччĕ:

"Тăшманран эп хĕрхенӳ кĕтместĕп,
Тус çыннăм ан хĕрхентĕр вăл мана.
Гете".

– Эпĕ Юманăн тус çынни пуласшăн, хĕрхенесшĕн мар, – терĕ вăл.

Пуçланчĕ вара асар-писер! Тантăшсен умĕнче эпĕ хĕрелсе çеç ларатăп. Тӳррипе каласан, тишкерӳçĕ эпĕ çырнине начар хак парассах шутламанччĕ. Çитменлĕхпе чĕлхе шăйрăкĕ туллиех иккен манăн унта! Космос теми те хăтараймарĕ поэмăна. Ун пирки Петр Петрович çапла каларĕ: "Андриян Николаев космонавт çинчен сăмах май çеç каласа кăтартни çителĕксĕр. Ку хăех çав тери пысăк тема".

"Каплипе пичетлеме май çук" – тесе палăртнă хамăн блокнота поэт сăмахĕсене. Халĕ шутлатăп та, тĕп сăлтавĕ ун чухнехи ял пурнăçĕнчи тӳнтер енсене ытлашши тиркенинчен те килме пултарнă. Тем тесен те Хусанкай шкулĕ усăллă пулчĕ. Киле таврăнсан эпĕ поэмăна тепĕр хут тĕплĕн юсаса çыртăм. Чĕрĕ классик асăрхаттарăвĕсене шута илсе каярах "Суйласа илнисем" кĕнекере пичетлерĕм. Андриян Николаев çинчен çырнă пĕчĕк сăвă райхаçатра, кайран "Чĕре çĕввисем" кĕнекере (1992 ç.) тухрĕ.

Виççĕмĕш!

Андиян Николаева

Ĕнер кăна эс паллă марччĕ тĕнчене, –
Паян сана пĕлет, паллать такам та лайăх.
Паян пин-пин тĕнче калать çине-çине:
– Чăваш ачи вĕçет, хăюллă Николаев!

Ĕнер Гагарина Титов... Çич тӳпене
Çĕр-шыв чапне çĕклерĕ икĕ паттăр вырăс.
Паян çитертĕн эс унта чăваш ятне.
Тăван çĕр-шыв мухтавĕпе пĕр харăс.

Тĕлĕнмелли пĕтмен иккен, татах та пур,
Çĕн хыпарпа тĕнче каллех кисренчĕ вирлĕн:
"Попович космосра! Эсир халь иккĕн, кур!"
Юлташ е тус, паллах, унта та кирлĕ.

Ăçтан çăл пек тапса тăрать пирте вăй-хал?
Усал сунакансем пуçĕсене ватаççĕ.
Мĕнех вара: тĕнчемĕр илтмелле
калатлăр халь:
– Пире хăлат çунат пилленĕ халăх влаçĕ!

...1970 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче чăваш кăйкăрĕ Андриян Николаевпа Виталий Севастьянов космонавт "Союз-9" караппа Çĕр чăмăрĕ тавра 18 талăк вĕçсе таврăнчĕç. Ку вăл космонавтикăна аталантарас ĕçре тата çĕнĕ пысăк утăм пулчĕ.

А.Г.Николаев çуралнăранпа 50 çул тултарнă май эпĕ хамăр район хаçатĕнче ятарласа страница хатĕрлерĕм. Вĕсем вырăсла та, чăвашла та тухрĕç. Çав номерсене Мускава космонавтсем пурăнакан Çăлтăр хулана ярса патăм. Андриян Григорьевич вĕсене вулана та асăнмалăх хăйĕн сăн ӳкерчĕкне автограф çырса ярса пачĕ. Кун çинчен те вулакансене савăнсах пĕлтернĕччĕ. Часах "Космонавт автографĕ" сăвă çыртăм. Вырăсла ăна Ульяновск поэчĕ Лев Бурдин куçарчĕ. "Молодой коммунист" хаçатра вăл пĕрремĕш страницăра Андриян Николаев сăн ӳкерчĕкĕпе пичетленсе тухрĕ.

САН ӲКЕРЧĔКРЕ: А.Г.Николаевпа И.Т.Тявин чăваш инженерĕ. Çăлтăр хули. ***1979 çул.***